28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 — СЕНТЯБРЬ 2 ВЫРСАРНИКУН 170(6921)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Советĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Тĕштырăсене пĕтĕмпех пухса кĕртмелли вунăкунлăх ирттересси çинчен

ВКП(б) Чăваш Обком бюровĕн постановленийĕ

1. 1945 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче Чăваш АССР-ĕнчи колхозсемпе совхозсенче тĕштырăсене тата пăрса йышши культурăсене пĕтĕмпех пухса кĕртмелли вунăкунлăх ирттерес.

2. ВКП(б) райкомĕсене тыпрула пĕтĕмпех пухса кĕртмелли вунăкунлăх ирттересси çинчен колхозсенчи, совхозсенчи тата МТС-сенчи пуçламĕш парти тата комсомол организацийĕсенче, колхозниксен пухăвĕсенче сутсе-явма, вунăкунлăх вăхăтĕнче тырпул пухса кĕртес ĕçе пур колхозниксене те тата ялта пурăнакан ĕçлеме пултаракан пур çынсене те хутшăнтармалла тума, машинăсемпе—комбайнсемпе, жнейкăсемпе, лобогрейкăсемпе, çаван пекех тата кĕреплеллĕ çавасемпе тулли усă курма хушас.

3. Пуçламĕш парти тата комсомол организацийĕсене, колхоз правленийĕсене, совхозсемпе МТС директорĕсене тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра ĕçе тĕрĕс организацилеме, ачасем валли ача ясликсемпе площадкисем, колхозниксем валли уйрăм столовăйсем уçма, вунăкунлăх вăхăтĕнче кашни ĕçлеме пултаракан колхозника, кашни комбайнерпа машиноведа уйрăм задани парса çав заданисене пĕр сăмахсăрах тултарса пымалла тума хушас.

4. ВКП(б) райкомĕсене тата райисполкомсене тырпул пухса кĕртес ĕçре юлса пыракан колхозсене ĕçе тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе пулăшу парса пыма хушас. Çакăн пек колхозсене МТС-семпе колхозсенчен комбайнсемпе жнейкăсем ямалла, вунăкунлăх вăхăтĕнче уйрăм тырпула пĕтĕмпех пухса кĕртес тесе, хуласенчи, район центрĕсенчи тата ялсенчи организацисемпе учрежденисенчен колхоз ĕçĕнче ĕçлеме пултаракан çынсем ямалла.

5. ВКП(б) райкомĕсене колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче колхозниксем, рабочисемпе служащисем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе анлăрах сарса яма тата колхозниксем, рабочисемпе служащисем хушшинче вунăкунлăх вăхăтĕнче ĕç кормине тата кăтартса панă заданисене ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса яма хушас. Вунăкунлăх пĕтнĕ тĕле районĕпе шутласан тĕштырăпа пăрса йышши культурăсене уйрăн пĕтĕмпех пухса кĕртмелле, тырпула сахалтан та 85 процент таран кăпăна хывмалла тата 60 процентран кая мар çапса пĕтермелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Государствăна тырă памалли пилĕккунлăх заданисене пĕр сăмахсăр тултарса пымалла

Паян эпир республикăри районсем государствăна тырă памалли çулталăкри плана мĕнле тултарса пынине кăтартакан сводкăна пичетлетпĕр.

Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна срокчен тырă парса татассишĕн пыракан ăмăртăра чи малти вырăнта тăрать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, колхоз руководителĕсем, коммунистсем хăйсен обязательствисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе патриотла пример кăтартаççĕ. Район тырă памалли графика ирттерсе тултарать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ĕççыннисем Чăваш республикин пĕтĕм халăх умĕнче, аслă Совет çĕршывĕ умĕнче государствăна тырă памалли плана ноябрĕн 1-мĕшĕччен тултарма сăмах панине асра тытаççĕ, республикăн чысĕшĕн, совет державин вăрçăри тата экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне малалла çирĕплетессишĕн большевикла кĕрешеççĕ. Халĕ ялтарсах çапла каламa тивет: **Чăваш республикинчи районсен Сĕнтĕрвăрри районĕпе танлашмалла!**

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе Етĕрне, Советски, Сĕнтĕр тата Çĕрпӳ районĕсем ялăхах ĕçлемеççĕ. Етĕрне районĕ графика кăшт çеç тултарса пырайманть.

Республикăра, пĕтĕмĕшпе пăсен, государствăна тырă парас ĕç мĕнле пыратьха? Хатĕрлев пункчĕсене юлашки пилĕккунлăх хушшинче, иртнĕ пилĕккунлăхпа танлаштарсан, икĕ хут ытларах тырă лесçе панă пулин те, государствăна тырă парас-ĕç çапах та тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Нумай районсем пилĕккунлăх заданисене тултарса пыраймаççĕ. Правительство çирĕплетсе панă тăрăх, республикăн август уйăхĕнче государствăна тырă памалли çулталăкри планăн 25 процентне тултармалла, анчах та ăна тултарман, çакă ĕнтĕ районсемпе колхоз руководителĕсене, мĕнпур коммунистсемпе партире тăман большевиксене тивĕçлинех пăшăрхантармалла.

Государствăна тырă памалли графика тултарса пыма мĕн кансĕрлет-ха? Уйрăм ĕççĕрсем çакна тырă чĕрриле, ăна хатĕрлев пункчĕсене турттарса кайма транспорт ситменнипе «ăплантарса пама» хăтланаççĕ, вĕсем йĕпе-сапа çанталăк çине хĕрсе кайсах ӳкелешеççĕ. Анчах та пăкăлтатма юратакан çынсем витĕ ытемсемпе авăнсем, сушилкăсем тăвас ĕç начар пынине асăрхамаççĕ, тырă типĕтмелли ытти тĕрлĕ майсемпе те усă курмаççĕ. Вара çак сăмах çапма юратакан çынсем йĕпе-сапа çанталăка темĕн те пĕр каласа вăрçнă вăхăтра колхозсенче государствăна тырă парас ĕçе юри кăн. сĕрлесе пыраççĕ, саботажниксем хăйсен прсĕр ĕçĕсене прĕккĕнех тăваççĕ. Хăшпĕр сĕрте государствăна тырă парас ĕçе большевикла организацилес вырăнне вăхăта калаçса ирттереççĕ, пĕр-пĕрне ӳкĕтлеме тăрăшаççĕ, çав вăхăтрах государствăна тырă памалли парăм ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Чĕрĕ ĕç вырăнне çакăн пек пăкăлтатса вăхăта ирттерекен çынсем шутне халĕ Вăрмар райкомĕн секретарĕ Смирнов, Канаш райкомĕн секретарĕ А. Долгов, Тăвай райкомĕн секретарĕ Молостнов, Пĕрес райкомĕн секретарĕ Сидоров, Первомайски райкомăн секретарĕ И. Долгов, Ишлей райкомĕн секретарĕ Пилуганов та кĕреççĕ. Çак асăннă районсенче, ытти районсенчи, вăл шутрах Сĕнтĕрвăрри районĕнчи условисенчен нимĕнпе те уйрăм мар пулсан та, вĕсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе чăтма çăк кайра пыраççĕ. Çак районсен руководителĕсем пилĕккунлăх заданисене вăхăтра тултарманшăн хăйсем ответ тытассине манса кайнă. Чăваш республики, государствăна тырă парас плана ноябрĕн 1-мĕшĕччен тултарма обязательство илсе, Тăван çĕршыв умĕнче панă паха сăмаха манса кайнă.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе юлса пынине малашне чăтма çук. Авăн çапассине тата тырра типĕтессине, хатĕрлев пункчĕсене тырă леçсе парассине хăвăртлатас тесе, пур майсемпе те усă курмалла. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе графика тултармалли майсем республикăри пур районсен те пур. Çитес пилĕккунлăх хушшинче кашни районăн государствăна тырă памалли графикпа палăртнă мĕнпур парăма парса татмалла. Çапла тума хушать пире Тăван çĕршыв.

Кашни район, кашни колхоз хăйĕн государство умĕнчи парăмĕсене вăхăтра татса пытăр!

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛАКРИ ПЛАНА СЕНТЯБРЬĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

РАЙОНСЕМ	Миçе процент тултарнă
Сĕнтĕрвăрри	27.4
Сĕнтĕр	26.0
Етĕрне	24.7
Çĕрпӳ	24.4
Чурачăк	24.1
Октябрьски	22.3
Советски	22.2
Вăрнар	22.1
Елчĕк	22.0
Муркаш	21.1
Красноармейски	21.0
Улатăр	20.5
Шупашкар	19.8
Куславкка	19.1
Калинино	18.8
Шăхасан	18.4
Пăрачкав	18.2
Ишлей	16.0
Элĕк	15.9
Чкаловски	14.9
Комсомольски	14.5
Çĕмĕрле	13.8
Хĕрлĕ Чутай	13.5
Вăрмар	13.1
Первомайски	11.8
Тăвай	10.8
Канаш	10.7
Шăмăршă	8.7
Пĕрес	8.3
Кувакино	4.9

Питирнов комбайнер уйăрăн планне тултарнă

СЕНТĔР, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС комбайнерĕ Федор Прокопьевич Питирнов августăн 30-мĕшĕ тĕлне 110 гектар вырăнне 122 гектар пухса кĕртсе хăйĕн планне ирттерсе тултарнă. Питирнов юлташ комбайнпа халĕ те куллен хи нормăна ирттерсе тултарса пырать.

Г. МОИСЕЕВ.

МАЛТА ПЫРАКАН БРИГАДА

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан М. Волков юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Ыраша планпа палăртнă 7 кун сырăнне 5 кун хушшинче пĕр тăкаксăр вырса пĕтерчĕ. Государствăна тырă парас тата аван çапас тĕлĕшпе те ытти бригадăсеннĕн малта пырать. Ыраш акса пĕтернĕ. Волков юлташăн бригади колхозăн кусса сӳрекен Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш çул ĕнтĕ хăй алшпче тытса тăрать.

Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татаççĕ

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). «Марс» колхозăн хирĕнче кăçал тулăх тырпул çитĕнчĕ. Анса пулнă тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес, государствăна срокчен тырă парса татас тесе, колхозниксемпе колхозницăсем çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ.

Колхоз тырă вырма тухсан çийĕнчех аван çапма тытăнчĕ. Комбайн молотилкипе тата тепĕр сложнăй молотилкăпа колхоз юлашки вунă кун хушшинче 200 гектар ыраш, 60 гектар тулă, 30 гектар пăрса çапса пуçтарчĕ. Тулă кашни гектартан 15 центнер тухать, ыраш та унтан кая мар. Аван çапма тытăнсанах государствăна тырă леçме тытăнчĕç. Государствăна тырă пама кунта ятарласа 13 çынтан бригада тунă. Çак бригадăна 26 лаша çирĕплетсе панă. Бригадăна Т. Салахеев юлташ ертсе пырать.

Çак бригада членĕнче ытларах Хĕрлĕ Çартан тавăннăй çĕнтерӳçĕ-воинсем ĕçлеççĕ. И. Хамидуллин, К. Бурганов, И. Галиев, Н. Бикмуллин тата ытти çитменсем те кунне икĕ хутчен тырă леçеççĕ. Колхоз председателĕ, орденоносец А. Гаязов юлташ вĕсемпе ятарласа канашлу ирттернĕ.

— Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра,—тет Гаязов юлташ,—ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Çар фондне темиçе пин пăт тырă патăмăр тата кооперацин урлă та темиçе пин пăт сутрăмăр. Эпĕ хам,—тет Гаязов юлташ,—государствăна пĕр танк, пĕр истребитель илсе патăм. Çапла совет халăхĕ Хĕрлĕ Çара кашни сехетре пулăшса пынине пула, пирĕн çĕршыв фашистла Германие аркатса тăкрĕ, халĕ уйăн юлашки союзникне Японие чĕркуççи çине лартрĕ. Пирĕн савăнăç пысăк, ĕçленĕçем ĕçлес килет,—тет вăл.

Кашни кун колхоз 630 пăт тырă леçсе тăчĕ.

Колхоз председателĕ А. Г. Гаязов юлташ тата Отечественнăй аслă вăрçă инвалидĕ орденоносец К. Гималлатдинов пуçарнипе, колхозниксемпе колхозницăсем сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă парса татма йышăннă. Халĕ çак обязательствăна пурнăçласситпĕн колхозниксемпе колхозницăсем ăмăртса ĕçлеççĕ. Кунта нормăна ирттерсе тултарман çын çук.

Колхоз августăн 27-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтернĕ. Пĕтĕм лаптăкз машинăпа ретĕн-ретĕн акнă.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Условисем пĕрех, ĕçĕсем пĕр пек мар

ПĔРЕС. Малта пыракан «Заря», «Искра», «Осоавиахим», «Тымар», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 12 гектар, «Осоавиахим» колхоз 8 гектар, «Тымар» колхоз 3 гектар планран ирттерсе акнă.

Анчах та районри «Чувашия», «8-е марта», «МОПР», «10 лет Октября» колхозсенче ыраш акасси ытла та сӳрĕккĕн пырать. «Чувашия» колхозăн 289 гектар акмалла пулсан, пурĕ те 51 гектар, «8 марта» 200 гектар вырăнне 60 гектар кăна канă. «Чувашия» колхоз председателĕ Тимофеев юлташ тырпул пухса кĕртес тата ыраш акас ĕçе пур колхозниксене те мобилизацилемен, кунта 40 çын ытла ĕçе тухмаççĕ. Колхозра кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ 7 вăкăр пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ. «МОПР» колхозра 13 вăкăрпа усă курма пулать, анчах та вĕсенчен 5-шне кăна кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ. Çак вăхăтрах колхоз председателĕ Федоров юлташ юлса пынин сăлтавне туртăм вăйĕ çителĕксĕрри çинче йăвантарма пăхать.

П. КУРАКОВ.

Тырпул пухса кĕртессине кирлĕ пек ертсе пымалла

Ишлей районĕнчи чылай колхозсем кăçал тырпул пухса кĕртмс тата государствăна тырă пама лайăх хатĕрленсе ĕçе тытăнчĕç. «Большевик», «Верный путь» тата ытти колхозсенчи те тырпул пухса кĕртес ĕç ăнăçлă пырать. «Большевик» колхоз районра чи малтан çурхи тĕштырăсене вырса пĕтерчĕ, ыраш акас ĕçе те вăхăтра, лайăх туса ирттерчĕ. Çак колхозсен ăнăçлăхĕ чи малтанах ĕç дисциплини çирĕплипчен, тырпул пухса кĕртес ĕçе ĕçлеме пултаракан пур колхозниксене те ярăçтарнипчен килет. «Большевик», «Верный путь» колхозсенче вырнă хыççăн çийĕнчех пучах пухса пыраççĕ.

Анчах та уйрăм колхозсенче тырпул пухса кĕртесси ытла та çитĕлĕксĕр пырать. Акă, «Активист» колхозах пăкр. Колхозра ĕçлеме пултаракан вăйпитти çынсем 108, ача-пăчасем 40 шутланаçĕ. Тĕрĕсленĕ вăхăтра кунта ĕçе пурĕ те 54 çын кăна тухнă. Вĕсенчен те ирхине 7 сехет тĕлне 8 çын, 8 сехет тĕлне 16 çын тухнă, ытти сем 9—10 сехет иртсен тин тухнă. Тырă вырса пухнă чухне хăшпĕр колхозниксем нумай тăккаласа хăварассĕ. Евдокия Самсонова вырнă 73 тăваткăл метр çинче 636 пучах тăккаласа хăварнă. Елизавета Самсонова вырнă участокра кашни тăваткăл метрта 33 пучах. П. Абасеева вырнă участокра—39 пучах тăкăнса юлнă. Çапла вара кашни гектар пуçне вăтам шутпа 90 килограмм ытла тырă тăккаласа юлнă. Чылай колхозниксем вырнă тырра вăхăтра кĕлтесене çыхман. Сыхнă кĕлтесене сĕмĕле хывман, вĕсем нумай вăхăт хушши тĕрре выртнă. Бригадир Ермаков çак çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшман. тунă ĕçе эрешленчĕн е уйрăм колхозниксенчен йышăнассине организацилемен, çавăн пекех колхоз председателĕ Иванов юлташ та бригадирсенчен йышăнман, тырпул пухса кĕртес ĕç мĕнле пынине сахал интересленнĕ. Районри çĕрĕç пайне туман ĕçе тунă тесе суя сведенисем парса ларнă. Государствăна график тăрăх тырă парассине организацилемен.

«Броневик» колхозра та тырпул пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Колхозра ĕçе хутшăнма пултаракансем 108 çын пур. Тĕрĕсленĕ кун вара тырă вырма пурĕ те 48 çын кăна тухнă, 9 çын вăрмана кăмпа пухма кайнă, ытти сем хăйсен ĕçĕсене тунă. «Броневик» колхозра та ĕçе кая юлса тухаççĕ. Ирхине 8 сехет тĕлне 3 çын, 9 сехет тĕлне 11 çын, ытти сем 10 сехет иртсен тухнă. Çак колхозра та тырпула тăккаласа выраççĕ. Ирина Матвеева вырнă участокра кашни тăваткал метр çинче 46 пучах юлнă.

«Броневик» колхозра СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени çак вăхăта çитсе те колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса паман. Кунта колхозниксем пурте пĕрле ĕçлеççĕ, уйрăм сдельщина тата уйрăм участоксенче ĕçлесси çинчен никам та пĕлмест.

Паллах, колхозри ĕç начар пынăшăн чи малтанах колхоз председателĕпе бригадирсем айăплă. савăнăппа та колхозниксем умĕнче те, государство умĕнче те вĕсем ответ тытмалла. Кашни колхоз руководителĕн çак ответлăха туйса ĕçлемелле.

А. ФИЛИППОВ.
райкомри инструктор.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРЬĔН 1-мĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче ИНÇЕТРИ ХЕВЕЛТУХАÇЕНЧИ 2-мĕш ФРОНТ çарĕсем Лăпкă океанри флотăн кораблĕсемпе тата часĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Курильски утравсем, çаплах вара Курильски утравсенче Япони çарĕсенчен тасатса пĕтернĕ.

Августăн 31-мĕшĕнче японецсен 13.000 салтакĕпе офицерĕ тата 5 генералĕ пирĕн çарсене тытăнса паранă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет шкулĕ çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче

(РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕпе В. П. Потемкинпа калаçни)

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн шкулсем темиçе миллион вĕренекен валли хăйсен алăкĕсене каллех яр уçса ячĕç. Çак вĕренӳ çулĕ юлашки 4 çул хушшинче ĕçленĕ условисенчен урăхларах условисенче пуçланчĕ. 1945 çул Германи фашизмĕпе Япони империализмне татăкăн çĕнтернипе палăрса тăрать. Совет шкулĕ вăрçа пывăрлăхĕсене чыслăн тӳссе ирттерчĕ. Çак вăрçăран вăл, пирĕн пĕтĕм çĕршыв пекех, тата çирĕпрех пулса тухрĕ.

Эпир çакăнпа савăнса мухтанатпăр: хамăр Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем, нимĕç фашизмĕпе Япони империализмне çĕнтерекенсем—совет шкулĕнчен вĕренсе тухнă çынсем пулчĕç. Шкул вĕренекенсене паттăр пулма, Тăван çĕршыва хăйсен пурнăçне шеллемесĕр хӳтĕлеме вĕрентмелли тĕп задачăна пурнăçларĕ.

Халĕ, мирлĕ тапхăрти çĕнĕ условисенче, çав задачăсемпе пĕрлех (вăл задачăсем çаплипех юлаççĕ) воспитани ĕçĕнче пултаруллă ĕçĕн паттăрĕ пулма вĕрентесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнать.

Халĕ, мирлĕ тапхăр условийĕсенче, халăха çутта кăларас ĕçшĕн калама çук пысăк вăйăсем çитĕнтерме тăрăшаççĕ. Вăрçă хыççăнхи тапхăр шкул умне строительсене—халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратмалли тата малалла аталантармалли çав тери чаплă плана пурнăçа кĕртекен строительсене — вĕрентсе хатĕрлес ответлă задача кăларса тăратать.

Шкулсемпе учительсем халăх хуçалăхĕпе культурăн мĕнпур облаçĕсенче хамăрăн Тăван çĕршыва чунтан парăнса ĕçлекен çынсене тата тăрăшарах вĕрентсе хатĕрлĕç. Çак вĕренӳ çулĕнче пирĕн шкул ĕçне тата çӳлерех хăпартмалла, вĕренӳпе воспитани ĕçне тата ытларах лайăхлатмалла.

Сӳтĕç ыйтăвĕсемпе август уйăхĕнче пулса иртнĕ Пĕтĕм Россипăри канашлу çав задачăна ăнçăлăн пурнăçа кĕртмелли майсене палăртса хучĕ. Çав задачăсене пурнăçа кĕртесси пурпиччен ытла учительсенчен килет. Учительсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе кулленех ĕçлемесен, паллах ĕнтĕ, шкул ĕçне лайăхлатасси çинчен шухăшламалли те пулмасть.

Пирĕн çĕршыв халь вĕренекенсенчен те ытларах ыйтать. Совет шкулĕнче вĕренекен ача шкулта та, шкул тулашĕнче те примерлă ача пулмалла.

Сталинла аслă саманана тивĕçлĕ çамрăк ăрăва лайăх вĕрентсе ӳстересшĕн пĕр чарăнмасăр кĕрешесси—кашни учителĕн, кашни шкулăн, кашни районăн, кашни облаçăн чыслă ĕçĕ пулса тăтăр.

Пирĕн шкул—халăх шкулĕ. Ана советпа парти органĕсем тата йышлă организацисем яланах юратпă. Вĕсем пирĕн шкулсене уйрăмах хыта тăрăшса сыхланĕç, вĕсем шкулсене çак вĕренӳ çулне пуçлама питĕ юратса хатĕрлерĕç. Мускав облаçĕнчи Истра районĕн (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Данилов юлташ), Курск облаçĕнчи Сергунь районĕн (райсовет председателĕ Болдырев юлташ, ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Мигаль юлташ), Горький хулинчи автозавод районĕн (райсовет председателĕ Завьялов юлташ, Молотов ячĕпе тăракан автозаводăн главнăй инженерĕ Власов юлташ), Воронеж облаçĕнчи Белогорье районĕн тата ытти нумай районсен руководителĕсен примерĕ питĕ ырă. Вĕсем шкулсене вăхăтра юсаса пĕтернĕ çеç мар, вĕсем шкулсене оборудовани те хатĕрлесе панă, чылай çĕрте шкулсене çĕнĕрен туса лартнă.

Шкулсем çак çитĕнӳсене пирĕн партипе правительство, пирĕн çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ куллен тăрăшнине пула турĕç.

Халĕ, аслă Сталин пирĕн çĕршыва пĕтĕм тĕнчипе историллĕ чапа кăларнă вăхăтра, пирĕн хамăрăн шкула та малта пыракан пĕтĕм этемлĕхшĕн примерлă шкул туса хумалла. (ТАСС).

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕ Шупашкарта

Ĕнер шкул ачисене çутă хĕвел те çав тери кăмăллăн, çав тери ăшшăн савса пăхнă пек туйăннă. Ĕнер вĕсемшĕн пысăк савăнăç пулчĕ. Каникул вăхăтĕнче хаваслă каннă хыççăн вĕсем каллех вĕренме пуçларĕç.

Шупашкарти хĕрачасен 3-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче вĕренекенсем шкула прех пухăнчĕç. Хăйсем пурте уяври пек капăр тумланнă, пĕр-пĕринпе кулкаласа кăна калаçаççĕ. Вĕсем хушшинче кăçал тин вĕренме тытăнакан 7 çулхи çамрăк хĕрачасем те пур.

Шкул алăкĕ çине илемлĕ саспаллисемпе «Добро пожаловать» тесе çырса çапнă. Шкула пыракан ачасене дежурнăй учительсемпе шкулти комсомолецсем савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Çичĕ çулхи ачасене чылайăшне шкула ашшĕ-амăшĕсем илсе пычĕç. Шкул умне тата чечек сыхăсем йăтнă çамрăк ачасем хĕрлĕ ялавлă ушкăнĕ çитсе тăчĕ. Ку—хуларн 11-мĕш номерлĕ ача садĕнчи çамрăксем, вĕсем пĕрремĕш класра вĕренме пуçласаççĕ.

Учительсем те ĕнер шкула прех, 8 сехетренех пухăннă.

Акă, ачасен савăнăçлă шавне хупласа, звонок сасси янăраса кайрĕ. Вăхăт 8 сехет те 30 минут... Дежурнăй учительсем Игнатьевăпа Панпшева ачасене шкул умне пухăнма хушрĕç.

— Ачасем!—терĕ йăваш сасăпа шкул директорĕ Вера Ивановна Козлова,—вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа сире пурне те хĕрӳллĕн саламлатăп. Каникулта канса сывлăха çирĕплетнĕ хыççăн паян эпир каллех вĕренме пуçлатăр.

Директор нумай каламарĕ, анчах унăн сăмахĕсем кашни ачан чĕрнинех кĕрсе вырнаçрĕç.

Пĕрремĕш класри ачасем патне Стенина тата Рождесенская учительницăсем пычĕç. Ачасем вĕсене çав тери ăшă кăмăллă, юратса кĕтсе илчĕç. Учительницăсем ачасене пĕрер тетрадь, ручка тата перо пачĕç. Вĕсене шкул çинчен каласа пачĕç. Каласу пĕтсен, пĕрремĕш класри ачасем килес саланчĕç. Пĕрремĕш класа пурĕ 105 ача вĕренме пынă. Ытти классене те пурте тенĕ пекех пухăннă. Сăлтавсăр пыман пĕр ача та çук.

Шкул вĕренӳ çулне пуç енчен те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Классем çутă та таса, вĕсене пурне те шуратса тухнă, партăсемпе доскасене сăрланă, шкул умне карта тытнă. Учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем кашни ача валлех çителĕклĕ. Вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе шкула чăлха фабрикипе Горькипе Хусан хушшинчи çулăн управленийĕ те пысăк пулăшу панă. Чăлха фабрики шкула 50 килограмм пурă пулсе панă, çул управленийĕ 50 кубометр вутă турттарса пулăшнă.

Вл. ПЕРМЯК.

Шкул вĕренӳ çулне хатĕрленсе кĕтсе илчĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Энтри Пасарĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕнех кашни учитель вĕренӳ ĕçĕсен планĕсене туса хатĕрленĕ, вĕсене шкул директорĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Шкулăн кăçал учебниксем çителĕклĕ. 5—7-мĕш классем валли çĕнĕрен 220 учебник илнĕ. Вĕренмелли хатĕрсене кашни ача валли илсе хатĕрленĕ.

Колхозниксем çар çынниселне Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен 1-мĕш класа кайакан 4 ачана урана тăхăнмалли япала. сем парса пулăшнă, 8 ачана алшăшсемпе чăлхасем сыхса панă. Кĕркунне шкулта вĕри апат пулать.

«ÇĔНТЕРӲ» ПАРАДНЕ КĂТАРТАКАН ТĔРЛĔ ТĔСЛЕ ФИЛЬМ

Столицăри кинотеатрсенче 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре пулнă Çĕнтерӳ парадне ӳкерсе илнĕ тĕрлĕ тĕсле фильма кăтартма пуслана.

Курма пынă çынсем чапла Хĕрлĕ площадь, Кремлĕн авалхи стенписене, кăвак чăрăшсене курассĕ. Площадь тăрăх фронтсен пĕрлештернĕ полкĕсем хĕрлĕ клавсемпе утса пыраççĕ, танксем, машинсем, пушкăсем çулĕ пуçланнă ятпа сире пурне те хĕрӳллĕн саламлатăп. Каникулта канса сывлăха çирĕплетнĕ хыççăн паян эпир каллех вĕренме пуçлатăр.

Директор нумай каламарĕ, анчах унăн сăмахĕсем кашни ачан чĕрнинех кĕрсе вырнаçрĕç.

Пĕрремĕш класри ачасем патне Стенина тата Рождесенская учительницăсем пычĕç. Ачасем вĕсене çав тери ăшă кăмăллă, юратса кĕтсе илчĕç. Учительницăсем ачасене пĕрер тетрадь, ручка тата перо пачĕç. Вĕсене шкул çинчен каласа пачĕç. Каласу пĕтсен, пĕрремĕш класри ачасем килес саланчĕç. Пĕрремĕш класа пурĕ 105 ача вĕренме пынă. Ытти классене те пурте тенĕ пекех пухăннă. Сăлтавсăр пыман пĕр ача та çук.

Шкул вĕренӳ çулне пуç енчен те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Классем çутă та таса, вĕсене пурне те шуратса тухнă, партăсемпе доскасене сăрланă, шкул умне карта тытнă. Учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем кашни ача валлех çителĕклĕ. Вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе шкула чăлха фабрикипе Горькипе Хусан хушшинчи çулăн управленийĕ те пысăк пулăшу панă. Чăлха фабрики шкула 50 килограмм пурă пулсе панă, çул управленийĕ 50 кубометр вутă турттарса пулăшнă.

Вл. ПЕРМЯК.

Шкул вĕренӳ çулне хатĕрленсе кĕтсе илчĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Энтри Пасарĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕнех кашни учитель вĕренӳ ĕçĕсен планĕсене туса хатĕрленĕ, вĕсене шкул директорĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Шкулăн кăçал учебниксем çителĕклĕ. 5—7-мĕш классем валли çĕнĕрен 220 учебник илнĕ. Вĕренмелли хатĕрсене кашни ача валли илсе хатĕрленĕ.

Колхозниксем çар çынниселне Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен 1-мĕш класа кайакан 4 ачана урана тăхăнмалли япала. сем парса пулăшнă, 8 ачана алшăшсемпе чăлхасем сыхса панă. Кĕркунне шкулта вĕри апат пулать.

«ÇĔНТЕРӲ» ПАРАДНЕ КĂТАРТАКАН ТĔРЛĔ ТĔСЛЕ ФИЛЬМ

Столицăри кинотеатрсенче 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре пулнă Çĕнтерӳ парадне ӳкерсе илнĕ тĕрлĕ тĕсле фильма кăтартма пуслана.

Курма пынă çынсем чапла Хĕрлĕ площадь, Кремлĕн авалхи стенписене, кăвак чăрăшсене курассĕ. Площадь тăрăх фронтсен пĕрлештернĕ полкĕсем хĕрлĕ клавсемпе утса пыраççĕ, танксем, машинсем, пушкăсем çулĕ пуçланнă ятпа сире пурне те хĕрӳллĕн саламлатăп. Каникулта канса сывлăха çирĕплетнĕ хыççăн паян эпир каллех вĕренме пуçлатăр.

Директор нумай каламарĕ, анчах унăн сăмахĕсем кашни ачан чĕрнинех кĕрсе вырнаçрĕç.

Пĕрремĕш класри ачасем патне Стенина тата Рождесенская учительницăсем пычĕç. Ачасем вĕсене çав тери ăшă кăмăллă, юратса кĕтсе илчĕç. Учительницăсем ачасене пĕрер тетрадь, ручка тата перо пачĕç. Вĕсене шкул çинчен каласа пачĕç. Каласу пĕтсен, пĕрремĕш класри ачасем килес саланчĕç. Пĕрремĕш класа пурĕ 105 ача вĕренме пынă. Ытти классене те пурте тенĕ пекех пухăннă. Сăлтавсăр пыман пĕр ача та çук.

Шкул вĕренӳ çулне пуç енчен те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Классем çутă та таса, вĕсене пурне те шуратса тухнă, партăсемпе доскасене сăрланă, шкул умне карта тытнă. Учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем кашни ача валлех çителĕклĕ. Вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе шкула чăлха фабрикипе Горькипе Хусан хушшинчи çулăн управленийĕ те пысăк пулăшу панă. Чăлха фабрики шкула 50 килограмм пурă пулсе панă, çул управленийĕ 50 кубометр вутă турттарса пулăшнă.

Вл. ПЕРМЯК.

Шкул вĕренӳ çулне хатĕрленсе кĕтсе илчĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Энтри Пасарĕнчи 7 çул вĕренмелли шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕнех кашни учитель вĕренӳ ĕçĕсен планĕсене туса хатĕрленĕ, вĕсене шкул директорĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Шкулăн кăçал учебниксем çителĕклĕ. 5—7-мĕш классем валли çĕнĕрен 220 учебник илнĕ. Вĕренмелли хатĕрсене кашни ача валли илсе хатĕрленĕ.

Колхозниксем çар çынниселне Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен 1-мĕш класа кайакан 4 ачана урана тăхăнмалли япала. сем парса пулăшнă, 8 ачана алшăшсемпе чăлхасем сыхса панă. Кĕркунне шкулта вĕри апат пулать.

«ÇĔНТЕРӲ» ПАРАДНЕ КĂТАРТАКАН ТĔРЛĔ ТĔСЛЕ ФИЛЬМ

Столицăри кинотеатрсенче 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Хĕрлĕ площад

ВЦСПС Президиумĕнче

Ĕççыннисен ĕç условийĕсене тата ĕççыннисене йăлапа культура енчен пулăшас ĕçе пур майпа та лайăхлатар

Августăн 31-мĕшĕнче ВЦСПС Президиумĕ профсоюзсен Центральный Комитечĕсен председателĕсемпе пĕрле лару туса ирттерне. Çав ларура рабочисемпе служащисен ĕç условийĕсене тата вĕсене йăлапа культура енчен пулăшас ĕçе лайăхлатас тĕллĕпе профсоюз организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсене сӳтсе-явнă. Ларăва ВЦСПС Председателĕ В. В. Кузнецов юлташ уçнă.

ВЦСПС-ăн XIII-мĕш пленумĕ, — тенĕ Кузнецов юлташ,—профсоюз организацийĕсене производствăра ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн вăйлăрах кĕрешме, рабочисемпе служащисен пурăхпа йăла тата культура пушисене тивĕçтересшĕн ытларах тăрăшма хушса хăварчĕ. Пирĕн çĕршыври паттăр рабочи класс вăрçа вăхăтĕнче хастарлăн, хăйĕн вăйне шеллемесĕр ĕçлерĕ. Хальхи вăхăтра, вăрçа пĕтнĕ кыçăн, фашистла немĕç захватчикĕсем ишсе хăварнă халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма тата малаллă аталантарма тытăннă вăхăтра, рабочисемпе служащисен чи кирлĕ нушисене тивĕçтересшĕн тăрăшасси профсоюз организацийĕсен тĕп ĕçĕ пулмалла. Чи кирлĕ задачăсенчен пĕри вăл—рабочисемпе служащисене хваттер тупса парасси тата коммунальнăй предприятисем енчен пулăшасси пулса тăрать. Фабрикăсемпе заводсенчи комитетсен тата вырăнти комитетсен çĕнĕ сӳртсемпе коммунальнăй предприятисем тумалли плансене, сӳртсемпе коммунальнăй предприятисене пăртак е тĕпренех юсамалли плансене мĕнле пурнăçланине тата хĕл валли вутă турттарассине кулленех контроллесе тăмалла. Профсоюз организацийĕсен 1945 çулта строительство планĕсене пĕтĕмпех пурнăçлаттарма, пурăнмалли сӳртсене йĕркене кĕрттерме, рабочисемпе служащисен общежитийĕсем валли мĕн кирлине йăлтах туса партарма тăрăшмалла. Чи малтан çар çыннисен семьисем, Отечественнăй вăрçă инваличĕсем тата çартан таврăннă вăрçă воинсем пурăнакан хваттерсене юсаттармалла.

Профсоюзсен Центральный Комитечĕсен тата фабрикăсемпе заводсенчи комитечĕсен кашни предприятирех часрах нормальнăй ĕç кунĕ тутарма, ĕç кунĕнчен ытлашши ĕçлеттерес тата канмалли кунсенче ĕçлеттерес практикăна пĕтерсе лартма тăрăшмалла. Профсоюзсен задачи —предприятисен администрацине ĕç кунĕнчи тăршшĕ çинчен калакан законсене пурнăçласа пыртарасси, рабочисемпе служащисене отпусксем тата канмалли кунсем партарасси, çитĕнсе çитмен ачасемпе хĕрарăмсен ĕçне сыхласси, хăрушсăрлăх техникипе промышленность санитарийĕн правилисене пурнăçлаттарасси пулса тăрать.

Профсоюзсен кану сӳрчĕсемпе санаторисем валли, сыватас шутпа апатлантарас, ачасене культура енчен пулăшас тата ытти ĕçсем валли уйăрса хунă укçана пĕтĕмпех ĕçе ямалла. Уйрăмах столовăйсен ĕçне лайăхлатасси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла, подсобнăй хуçалăхсенче туса илнĕ продуктсемпе терĕс усă курпинпе курманнине тĕрĕслемелле, рабочисен апат-çимĕçне лайăхлатмалли çĕнĕ майсем тупас тĕллĕпе пуçарулăх кăтартаканселе хавхалантармалла.

Ĕççыннисене культура енчен пулăшас тĕллĕпе профсоюзсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа, Кузнецов юлташ культура учрежденийĕсене пурне те халех хĕллехи условисенче ĕçлеме хатĕрлемеллине, сӳртсене юсамаллине, вĕсем валли вутă хатĕрлемеллине, клубсемпе библиотекăсен тата хĕрлĕ кĕтессен сӳрчĕсенче çав учрежденисем хăйсем ĕçлемеллине кăтартса панă.

Кузнецов юлташ тата профсоюз организацийĕсен халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕкçуллăх плана хатĕрлес ĕçре пысăк вырăн йышăнмалли çинчен асту тарнă.

Пренире çаксем тухса калана: Никитина юлташ (çăм промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн председателĕ), Борисов юлташ (автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн председателĕ), Агаджанов юлташ (хĕçпăллă промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзĕн Центральный Комитечĕн председателĕ), Буркина юлташ (ВЦСПС-ăн хваттерпе йăла отделĕн заведующийĕ), Тарасов юлташ (ВЦСПС секретарĕ) тата ытти сем те.

ВЦСПС Президиумĕ юлашкинчен решени йышăннă. Çав решенире ĕççыннисене культурăпа йăла тĕлĕнчен пулăшас тата вĕсен ĕç условийĕсене лайăхлатас тĕллĕпе центрти, облаçсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитетсем умĕнче тăракан конкретнăй задачăсене палăртса панă. (ТАСС).

Уйăхран уйăха—пысăкрах çитĕнӳ

Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура тивлĕн ĕçлесе, Шупашкар пристанĕ çитĕнӳ хыçăн çитĕнӳ тăвать. Пристань коллективĕ июль уйăхĕнчи плана чылай ирттерсе тултарнăччĕ тата Тури Атăл пароходствин пристанĕсем хушшинче малти вырăна тухнăччĕ. Çакăн хыçăн кунти работниксем татах та хавхаланса ĕçлерĕç. Пристань август уйăхĕнче таварсемпе пассажирсем турттармалли плана тоннаж енĕпе 146 процент, тонно-километр енĕпе 231 процент тултарнă.

Пристань коллективĕ иртнĕ уйăхра тупă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма шутламасть: сентябрь уйăхĕнчи плана икĕ кун ирттерсе тултарма пулнă.

Стахановецсем ĕçĕн ăнăçлăхне татса пыраççĕ

Шупашкарти табак фабрикинчи рабочисем Стахановецсен Пĕтĕм Союзри кунне ĕç тухăçлăхне ӳстернипе, стахановецсен ретне тăнипе кĕтсе илчĕç. Хальхи вăхăтра фабрикăра 44 стахановец шутланать. Стахановецсем кунта вăя шеллемесĕр, вăхăта пĕлмесĕр ĕçлесе, ытти рабочисене тухăçлă ĕçĕн примерне кăтартаççĕ. Акă, табак типĕтекенсем Деменовăпа Пашкова стахановкăсем кашни икĕ сыннăн ĕçлеççĕ: нормăна 200-шер процент тултараççĕ.

Чăваш хĕрачисем П. Ильинапа Ефремова фабрикăра ĕçлеме вăрçă çулĕсенче тытăннă. Вĕсем уйăхри нормăна 1,5 хут ирттерсе тултараççĕ. Çав вăхăтрах вĕсен ĕç пахалăхĕ те аван.

Табак тураканĕ Хазова, папироссене пачкăна хывакансем Е. Овчинникова, Т. Кузнецова тата Григорович стахановкăсен ĕçĕ нормăран чылай тухăçлăрах. Е. Овчинникова юлташа тухăçлă та лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. Стахановец-слесарь И. Овчинников юлташ «За трудовую доблесть» медаль илме тивĕçлĕ пулнă.

Шăхасан районне Оборонăн Государственный Комитечĕн кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пани

Çак кунсенче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе мала тухнă Шăхасан районне Оборонăн Государственный Комитечĕн кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пани. Кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава панă ятпа район центрĕнче парти, совет, комсомол, колхоз руководителĕсен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларура Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева тата Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ И. Н. Широв юлташсем пулнă. И. Н. Широв юлташ Оборонăн Государственный Комитечĕн кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Шăхасан райсовет исполкомĕн председательне К. Д. Медянин юлташа парса, колхоз руководителĕсемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсене правительствăн чаплă премине—Оборонăн Государственный Комитечĕн кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ ятпа сывлăх сунса саламланă. Çак чаплă ялава малашне те районăрах хăварассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕннĕ.

Райсовет исполкомĕн председательĕ Медянин юлташ, Оборонăн Государственный Комитечĕн кушса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илсе, çак чаплă премипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре, çавăн пекех тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçре те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарса пырĕ, тенĕ. Медянин юлташ парти, совет тата колхоз руководителĕсене выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма ферма çуртĕрĕсене теплĕн юсассишĕн тата выльăх-чĕрлĕх продукцĕсем государствăна вăхăтра парса татассишĕн пикенерех ĕçлемелле.

Выльăх валли лайăх та таса вите кирлĕ

Шупашкар районĕнчи Шурка ял Советне кĕрекен «Победа» колхозра выльăх-чĕрлĕх валли сӳртĕр çителĕклĕ, анчах вĕсем юсавсăр. Витессине пырса кĕме сук, тислĕкпе тата ытти япаласемпе тулса ларнă. Вите тăрри шăтса пĕтнĕ, сумăр витĕрех каять, çавăнпа та тислĕк чĕркуçи таранах çăрăнать.

Колхозăн ферминче 9 сысна ами пур, вĕсем çурланă, анчах та çурисем вара нумайĕшĕ вилсе пĕтнĕ. Ферма заведующийĕ Михайлова ферма работницĕсем хушшинче дисциплинăна кирлĕ вырăна лартман, колхоз председателĕ те ферма çине çаврăнса пăхмасть.

Л. ТАРАСКИН.

Хĕллене хатĕрленеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ямайкасси ял Советне кĕрекен колхозсенче выльăх-чĕрлĕх сӳртĕрĕсене хĕллене хатĕрлес тĕллĕпе лайăх ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах ку ĕçре «Большевик» тата Каганович ячĕпе тăракан колхозсем малта пыраççĕ. Ку колхозсенче выльăх витисене пĕтĕмпех юсаса пĕтернĕ, суса тасатса дезинфекци тунă. Кунта пĕрлех хăшпĕр колхозсем паянхи кунах çитсе те выльăх витисене юсас тĕллĕпе нимĕн те туман-ха. Сăмахран «Çеçмер» колхоз (председателĕ Ф. Михайлов юлташ) выльăх витисене юсас тĕллĕпе пиммĕн те туман. Лаша витин урай хăмисем унта-кунта кăна тăрса юлнă. «Çеçмер» колхозăн та хĕллене хатĕрленес тĕллĕпе пикенерех ĕçлемелле.

Г. ЗАХАРОВ.

Англи карапĕсем Гонконг портне кĕнĕ

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен Лăпкă океанри флочĕн пысăк соединенийĕсем Гонконг çывăхĕнче тăрасçĕ. Англи самолечĕсем листовкăсем пăрахнă. Вĕсем çав листовкăсенче японецсен Гонконгри командующине акăлчансемпе сыхăну тытма ыйтнă. Флот соединенийĕсене Харкурт адмирал командир пулса ертсе пырать, вăл «Индомптебл» карап çинче пырать.

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, Англин Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: акăлчансен тинĕс-çар вăйĕсем Гонконг портне кĕнĕ. Вĕсене Харкурт контр-адмирал командир пулса ертсе пырать.

ЯПОНИ ПОЛИТИКИН ХАЯР УЛТАВЛАХĔ ÇИНЧЕН ЛАТТИМОР ÇЫРНА СТАТЬЯ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи ыйтусем тĕлĕпе специалист пулса тăракан Латтимор Оверсис Ньюс агентстви панă статьинче çапла асăрхаттарать: союзниксене пĕр-пĕринчен уйăрса ярас тесе, японецсем хăйне уйрăм маневрсем тăваççĕ, тет. Вăл калана тăрăх, японецсем союзниксен пĕрлĕхне пăсмашкăн императорпа усă курма хăтланаççĕ.

Совет Союзĕпе Китай хушшинче савăл çапса кĕртес ĕçре вĕсем ытти майсемпе те усă курма шутлаççĕ. Японири радио Япони Азие империалистсем пуç пулса тăнинчен хăтарассине пĕлтерекен çĕршыв пулса тăрать, теме хăтланать. Япони премьер-министрĕ Японне Китайпа пĕрле пыма сĕнет, тет Латтимор. Çакă, тет Латтимор малалла, японецсем Японне Китайăн сылтăмра тăракан çыннисемпе союз тутарма хăтланнинне пĕлтерет. «Çакна вĕсем Совет Союзĕпе Китай республикине пĕр-пĕринне килĕштерсе ĕçлеме кансĕрлесшĕн пулса тăваççĕ, çакă вăл Япони хăйĕн çарĕсене Чунцин влаçĕсем нумаях пулмасть панă инструкцисемпе усă курма тăрăшнине кăтартать (çав инструкцисенче йĕрке тытса тăмашкăн хĕçпăшала пăрахмалла мар, тенĕ, çакă вăл Китай халăхĕ вăйăр юлассине пĕлтерет). Китай, Россия, Америка тата Англи пĕр пек политикăна пурнăçа кĕртесе пыриччен японецсем политикăри пуçарулăха хăйсен аллинче тытса тăма пултараççĕ. Императора сыхласа хăварни япончесене çак ĕçре пулăшать».

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧĔ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМПЕ ФИНЛЯНДИ ХУШШИНЧИ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУСЕМ ÇĔНЕРЕН ПУÇЛАНСА КАЙНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаментĕнче çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Финлянди хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнусем августăн 31-мĕшĕ выран тенĕ чух çурçĕрте пуçланса каяççĕ, тенĕ.

Государство департаментчĕ кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă.

«Государство департаментчĕ августăн 20-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕччĕ: американецсен Хельсинки хулинчи представительне Финляндин правительствине Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе дипломатиллĕ çыхăнăма сĕнме хушнă, теннĕччĕ. Финляндин правительстви кирлĕ пек ответ панине пула, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Финлянди хушшинчи дипломатиллĕ çыхăнусем 1945 çулхи августăн 31-мĕшĕ выран тенĕ чух çурçĕрте пуçланса каяççĕ. Çав вăхăтран пуçласа Америкăн Хельсинки хулинчи миссийĕ пĕр вăхăтрах дипломати представительстви тата консульство пулса ĕçлеме пуçлать. Миссин пĕрремĕш секретарĕ Халли вăхăтлăха посланник ярăммăн, Америкăн ĕçри поверенныйĕ пулса ĕçлет».

НЬЮ-ЙОРКРА ПРОФСОЮЗСЕН ЧЛЕНĔСЕМ ДЕМОНСТРАЦИ ТУНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 29-мĕшĕнче Медисон-Сквер-гарденра Производствăлла профсоюзсен Конгресне кĕрекен профсоюзсен 50.000 членĕ демонстраци тунă. Рабочисем площадьре йĕркеллĕн пынă, вĕсем унта ялавсемпе плакатсем йăтса пынă, плакатсем çине Конгресăн рабочисене кунĕпех ĕçлемелĕх ĕç пама, ĕçукçине тата ĕçсĕрлĕх пособипе ӳстерме хушакан законсем йышăнтармалла, тесе çырнă. Рабочисем тата Нью-Йорк штачĕн губернаторĕнчен Дьюирен ĕçсĕрлĕх пособине ӳстермелли закона йышăнмашкăн çав штатăн законсем кăларакан пухăвне халех пухма ыйтнă.

Площадьре митинг пулса иртнĕ. Митингра мореаксен профсоюзĕн председателĕ Каррен председатель пулнă. Каррен хăйĕн митинг уçăлнă чухне калана сăмахĕнче çапла каланă: Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пысăк промышленниксем пирĕн чухăлăх туса хураççĕ, тенĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИ МИНИСТРĔСЕНЕ ФАШИСТСЕМ ВĔЛЕРМЕ ХАТĔРЛЕННИНЕ ПĔТЕРСЕ ЛАРТНИ

ПРАГА, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Прагăри радио çапла пĕлтерет: Чехословакин хăрушсăрлăх органĕсем премьер-министр заместительне Говальда тата сутĕç министрпе Неедлына немĕç террористĕсем вĕлерме хатĕрленнинне сиссе пĕтерсе лартнă. Çав сыпсене немĕç террористĕсем Свобода хулинче е Янска Лазнăра августăн 18-мĕшĕнче е 19-мĕшĕнче вĕлерме шутланă.

Чехословакин хăрушсăрлăх органĕсем пĕр ушкăн сын пирки, çав хушăра Сагассер немĕç пирки, иккĕленсе тăнă, çавăнпа вĕсене сăнасах тăнă. Августăн 18-мĕшĕ выран тенĕ чух çĕрле 2 сехет тĕлĕнче Сагассер тусем хушшинне кайнă. Унта вăл хăйĕн юлташĕсемпе тĕл пулнă. Хăрушсăрлăх органĕсен сотрудникĕсем ун хыçăнах пынă. Икĕ енĕ те пĕр-пĕрне пăшалпа пеме пуçланă. Çавăн чухне вара Сагассера вĕлернĕ.

Вăл йăтса пынă михĕре хăрушсăрлăх органĕсен сотрудникĕсем хĕçпăшал тата сирĕнтерегпи япаласем тупнă. Сагассер кĕсйинче çакăн пек сырнă хут тупнă: «Министрсем çак уйăхăн 18-мĕшĕнче килеççĕ. Пурте хатĕр». Çак хут хăрушсăрлăх органĕсем иккĕленни тĕрĕс пулнине кăтартса панă.

Сагассер вăл фашистсен вăрттăн ĕçлекен организацийĕн членĕ пулнă. Çав организаци Чехословакин чикĕ сумĕнчи районсене Чехословаки республикинчи уйăрса яма хатĕрленнĕ.

АЛБАНИРЕ СĔР РЕФОРМИ ÇИНЧЕН ЗАКОН КĂЛАРНА

БЕЛГРАД, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Албанин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Албанин халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен ассамблейăн президиумĕ сĕр реформи çинчен закон йышăннă, çавăн пекех тата немĕç оккупацийĕнчен спен курнă çемьесене, нимĕçсене пирĕç пынă вăрçăра инвалид пулса юлнă çыннисене, çĕршыва пĕрле кăларассишĕн пынă кĕрешӳре тăрантаракансемĕр тăрса юлнă çемьесене пулăшу парасси çинчен калакан законсем йышăннă.

ЮТ ÇĔРШЫВ ХРОНИКИ

Англи оккупацинелĕ зонăра Германин пропаганда министерствин статс-секретарĕ тата гитлерла пичечĕн руководителĕ пулса ĕçленĕ Отто Дитриха тытса хунă.

* * *

Франциран тухса кайнă 62 уйăх ирттĕн хыçăн Францие «Жанна д'Арк» крейсер таврăннă. Экипажсăр пусне, çав крейсер çине ларса Францие 600 француз морякĕ таврăнкă.

* * *

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал Америкăран Парижа таврăннă.

Иранра демократиллĕ организацисене хĕсĕрлеççĕ

ТЕГЕРАН, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 29-мĕшĕ иран тенĕ чух çĕрле çар губернаторĕ хушнă тăрăх, халăх партийĕпе профсоюзсен Тегеранри мĕнпур клубĕсемпе сурчĕсем умпе патрульсем тăратса тухнă. Тĕп клубсем патĕнче яланах 100-шер салтака яхăн тăраççĕ, вĕсем хушшинче полицейскисемпе жандармсем те пур. Çав суртсене никама та кĕртмеççĕ. Халăх партийĕн Тегеранри вокзала хире-хирĕç ларакан клубĕнче полипи пулеметсем лартнă. Апла пулин те, рабочисемпе интеллигентсен пысăк ушкăнĕ çав клуба кĕрсе кайнă. Тытăçу тавракурăш пулман, анчах та 5 рабочие тытса хупнă, вĕсенчен 3-шне вара çав кунах пĕрке кăларнă. Тегеранри нумай фабрикăсем умĕнче салтаксен вăйлă отрячĕсем тăраççĕ. Çапла, цемент завочĕ патĕнче яланах 30—40 çын тăрать.

ИРАНРИ ХАÇАТСЕНЕ ХУПНИ

БЕЛГРАД, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 29-мĕшĕнче Тегеран хулинче «Демавенд» («Ферман») ятлă хаçата хупнă. Çапла вара, Иранра «Ирĕклĕх фрончĕн» пĕрлешĕвне кĕрекен хаçатсене пурне те тенĕ пекех хупса пĕтернĕ.

ГРЕЦИРИ МАКЕДОНИРЕ ФАШИСТЛА ТЕРРОР АССА КАЙНА

БЕЛГРАД, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Белградра тухакан хаçатсем Грецири Македонире монархистла-фашистла террор саралли çинчен калакан çĕнĕ материалсем пичетлеççĕ.

Скопле хулинчен илнĕ çырура çапла каланă: Грецири монархистсемпе фашистсем сӳлăвсене контроллеме Грецие США, Англи тата Франци представителĕсем килнĕ çĕре хăйне маневрлĕ «хатĕрленне» пуçланă. Вĕсем хăйсен усал ĕçĕсем çинчен калама пултараканнисене пурне те пытарма васкаççĕ. Вĕсем Грецири Македонири тĕрмесенчен темиçе пин сынна Фесальяри тĕрмесене куçарнă. Бандитсем уйрăмах хытă аснă ялсенчен мĕнпур арçынсене Фессальяна янă.

Грецин влаçĕсем македонецсене фашистсен ЭПЭ организацине кĕме вăйпах хистеççĕ. Çак ĕçре вĕсем хăйне уйрăм месленсене ĕçлеççĕ. Сăмахран, ЭПЭ членĕ пулни çинчен калакан документсемсĕр хресченсене пасарсене ямаççĕ. ЭПЭ организацине кĕмен хресченсене хăшпĕр çĕрте ялтан та кăлармаççĕ, хире ĕçлеме те ямаççĕ.

Грецири Македонин темиçе районĕнче монархистла-фашистла бандитсем хăйсем хĕсĕрленĕ халăх кĕрсе пытаннă вăрмансене вут тĕртсе янă. Пушарсем тухнă районсене Греци çарĕсем çавăрса илнĕ.

Салтаксем хресченсене хĕнеççĕ тата пере-пере вĕлереççĕ. Мала лăпкă фашистла бандитсем Нунев хресчене «эпĕ македонец» тесе каланăшăн вилес патне çитичченех хĕненĕ. Çав ялта полипейскисем Василий Робев хресчене хăйĕн сурчĕ умĕнчех персе вĕлернĕ те ăна пытарма хăйĕн семьине нумайччен пĕрмаман.

Пумаях пулмасть монархистла-фашистла бандитсем Лернипа Кайларире «хамăр çĕре македонецсенчен тасатар!» тенĕ лозунгпа шовинистла та аркатуллă демонстраци туса ирттернĕ.

Ĕççыннин депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсене пĕлсе тăма

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче, каçхипе 8 сехетре, Пионерсен Çуртĕнче (Карл Маркс урамĕ, 11) ĕççыннин депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 32-мĕш сессийĕ уçăлать.

Сессире çак ыйтăва сӳтсе-явмалла: «Хула валли вутă хатĕрлесси тата турттарса кăларасси çинчен». Докладчик — Горсовет Исполкомĕн председателĕн заместителĕ А. В. Киселев.

Ĕççыннин депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн депутачĕсем сессине хăйсен удостоверенийĕсемпе кĕреççĕ.

Ĕççыннин депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ.

Ответлă редактор
заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Сукăрсен Улатăртри шкулĕ 1-мĕшпе 9-мĕш классене вĕренме пилет. Вĕренме кĕме çакăн пек документсем кирлĕ: ăста хăçан çураличе кăтартакан свидетельство тата сывлăх çинчен панă справка.

Вĕренекенсене общежитие вырнаçтараççĕ, апатлантараççĕ тата тумлантараççĕ. (Ăшă тумтирсем çеç памаççĕ).

Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан лир-сăран комбинатне çакăн пек работниксем кирлĕ: отделсен бухгалтерĕсем, плановик-экономист, ĕç тĕлĕпше ĕçлекен экономист, атăçăсем, пулăшакан рабочисем тата ученниксем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул., Ворошилова, 7, Кожкомбинат, Отдел кадров.

Чăваш АССР Наркомпросĕ ача сачĕсен воспитателĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли вилĕ уйăхлăх курса вĕренме пилет.

Вĕренекенсене стипенди парассĕ.

Çăтăм шкулăн 10-мĕш е 9-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене пилеççĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕнче вĕрентме пуçласçĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Односторонка, 6.

Фельетон

Çăкăр

(Пĕрре те кулса мар)

Эсир апат çисе ларатăр. Тин илсе килнĕ çăкăра сыртатăр та сирĕн шăлăр айне тăвар муклашки кĕрсе каять. Эсир кăна хирĕç нимĕн те каламастăр-ха.

— Юрать, юрать! Килте тăвар запасĕ хутшăнать,—тетĕр эсир кулкаласа.—Чеб-торг акаль те тăвар çителĕксĕртерех паратъ.

Анчах эсир часах хăвăр вырăнсăртарах шӳт тумне пăхатăр:

—Кăшт мунчала хушмасан, çăкăр кирпĕчĕ тытăнса тăраймасть, тĕпĕр-тĕпĕрех саланса каять. Пĕлесçĕ ĕнтĕ пекарньăрисем çăкăр ăшне мĕн хушмаллине.

Анчах сирĕн савнă арăмăр хăй те çăкăрпа шӳт тума юраманнине часах туйса илет. Черетлĕ сыртăкра унăн çăварĕнче, вут чулне çулупа пырса çаннă чухнехи пек, сасă илтĕнет те хĕлхем куранса каять. (Каçхи апат вăхăчĕ—тĕттĕмре хĕвăхем лайăх курăнатьçке-ха!).

—Ай!—тесе çухăрса ярать сирĕн савнă арăмăр, хăйĕн чалăшса кайнă янаххине пăвăç тупанĕпе тытса.

Çапла çăкăрпа шӳт тума юрамасть!

Анчах мĕн тумалла-ха çăкăр ăшне çавăн пек тĕрлĕрен «имçамсем» хурса пĕçерекенсемпе?

Хуçари халăх валли, тĕпрен пилсен, 2-мĕш пекарня çăкăр парса тăрать. Унăн заведующийĕ—Нина Петровна Романова; пекарня вĕçĕ сменăпа ĕçлет, смена начальникĕсем— Баранникова, Исаева, Данилова; склад заведующийĕ—Павел Васильевич Кулагин; лаборатори заведующийĕ—çамрăк та чипер çын—Корнилова. Вĕсем пурте лайăх çынсем. Вĕсене çăмăла татки те кĕрсе кайма пултарать.

Акă çăвăх ларĕсем йĕркерен ларса тухнă. Вĕсен пĕрин те хупăлчисем çук. (Вĕсене вутă çителĕксĕр чухне е хăйă вырăнне çунтарса янă пулмалла). Çапла, çăвăх ларĕсем уçах. Вĕсем ăшне маччаран тем те тăкăнма пултарать. Шăнасемшĕн, шăшисемшĕн, йĕке-хӳресемшĕн—«добро пожаловать»!

Çăвăх ларĕсем хушшине, цех витĕр— экспедицине кĕмелли çул выртать. Çак «аслă çулпа» хулари мĕнпур продавщăсем, пĕр сăмахпа каласан, такам та ирте çӳрет. Цеха шурă халатпа çеç кĕмелли йĕрке çинчен каламăпăр. Вăл идилли, романтика, пушă сăмах кăна! Кунта, çăкăр пĕçерекен чи таса пулма тивĕçлĕ çăкăр пĕçерекен ура тупанне сыпçăнса Симĕс пасарти Кайбулка çинчи, нумай-нумай урамсенчи «тӳрккес матери» сыпçăнса кĕрет.

Мĕншĕн? Мĕншĕн-ха экспедицие цех витĕр çӳремелле? Экспедицин хăйĕн алăкĕ пулнăçке-ха! Мĕншĕн ăна питĕрсе лартнă? Çăкăр ăшĕнче мунчала татăкĕсем ытларах пулччăр тесе-и? Çук, ушпа мар, çăкăра вăрласа пĕтересрех сыхланас тесе пуль?! Çакна ăна пекарньăри «ăслă» сынсем кăна пĕлеççĕ.

Хула сыпнисем час-часах çăкăр йĕпе (чĕрĕ мар. йĕпе) тесе ӳкелешеççĕ. Хăшпĕр «айвансем» тата çăкăра юри шыва чиксе кăлараççĕ тесе те «сӳпĕлтетеççĕ»— шыва чикнĕ çăкăр йывăртарах таять-çке-ха!

Куна та пекарньăрисем питĕ çăмăлтăла татки те кĕрсе кайма пултарать.

—Экспедицире вентиляци çук. Çавна пула вĕри çăкăртан тухакан пăс маччана ларать те, унтан вара, сумăр пулса, каялла çăкăр çине çавать. Вăт, çавăнпа кĕтесре выртакан çăкăр кирпĕчĕсем йĕпенеççĕ. Çук. кунта çăкăра юри шыва чиксе кăларăп пекарня историйĕнче халиччен пулман.

Самах майăн, кунта çăкăра çăкăр темеççĕ, кирпĕч (!) тесе чĕнеççĕ. А эсир, вулакан-юлташсем, çăкăр ыйтатăр!

—Çăкăр вăрланă пулман-и?—тесе тĕпчетĕр тата эсир.

— Вăрланă фактсем пулнă, анчах ытлă фактсем пулман.

Ĕлĕкхи склад заведующийĕн Васильевăн 31 тонна (1800 пат ытла) çăнăх тухман. Тухман та... Васильев хăй тухса тарнă. Шыраймăн та тупаймăн!..

Пекарньăри дебитор парăмĕсем, кăвак чусти йӳçсе хăнарчă пекех, ӳсеççĕ. Унăн вăхăтра вутă, çăнăх тӳлесе илме укçа çук. Ĕçлекенсене июль уйăхĕнчи ĕçукçине тӳлемен. Сăмах майĕн каласан, мана хама çур уйăхри ĕçукçине вăхăта тӳлемессен, энĕ çемьепех аптăратăп. Кунти çынсем шарламаççĕ, пурăнаççĕ. Мĕнле пурăннине хăйсем çеç пĕлеççĕ.

—Труба шăхарать!—тесçĕ кунта кулкаласа. Пекарньăран продавецсем куллен, вуппăр лав çăкăр турттарса тухаççĕ. Тĕрĕссипе, лав çине мĕн чухлĕ çăкăр тиенине никам та тĕрĕслемест. Хуралçă хут çинчине çеç пăхать.

— Пакладнойра—500 килограмм, пускра та—500. Кайма юрать...

— А ешĕкре, лав çинче мĕн чухлĕ? Ăна турă та лав хуçи кăна пĕлет. Труба шăхарать! Труба витĕр «кирпĕчсем» вăркăнаççĕ.

Эпир çак ӳкерчĕке пĕр ӳстермесĕр мĕнле пулнă çаплипех ӳкерсе пыме тăрăшрăмăр.

Юлашкинчен пирĕн çакна кăна ыйтас килет:

— Хлеботрест директорĕ Вишнев юлташ хăй мĕн сисе пурăнать-ши? «Кирпĕч»-и е çăкăр-ши? Тата çав «кирпĕч» пĕçерекенсем ĕççыннисенчен хăçан măшкăллама пăрахĕç-ши? Кашнин хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пымалла мар-ши? Çăкăр пĕçерекенсен—лайăх çăкăр пĕçермелле, кирпĕче вара—кирпĕч заводĕнчех çапмалла.

Афанасий ЙЕП.

РЕДАКЦИ АДРЕССĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ыхăçлăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

КТ 00242

Типография № 1 Управления ... афи промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 50 42 л. л.